28-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1945
ИЮНЬ
16
ШАМАТКУН
115 (6866) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) Обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн, ЧАССР Верховный Совечĕн тата Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗЕ

Пĕтĕм Союзри Çамрăксен Ленинла Коммунистла Союзне Ленин орденĕпе наградăласси çинчен

Гитлерла Германие хирĕç пынă Отечественнăй аслă вăрçă çулĕсенче Тăван çĕршывшăн питех те паха ĕçсем тунăшăн тата совет çамрăкĕсене Тăван çĕршыва пĕтĕм чĕререн парăнса ĕçлеме вĕрентсе ÿстерес тĕлĕшпе анăçлă ĕçленĕшĕн Пĕтĕм Союзри Çамрăксен Ленинла Коммунистла Союзне ЛЕНИН орденĕпе наградăлас.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.
СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1945 çулхи июнĕн 14-мĕшĕ.

Тивĕçлĕ награда

Паян «Правда» хаçатра Пĕтĕм Союзри Çамрăксен Ленинла Коммунистла Союзне Ленин орденĕпе наградăласси çинчен СССР Верховный Совечĕн Президиумĕ кăларнă Указ пичетленет. Указра каланă пек, комсомола çав аслă наградăна «гитлерла Германие хирĕç пынă Отечественнăй аслă вăрçă çулĕсенче Тăван çĕршывшăн питех те паха ĕçсем тунăшăн тата совет çамрăкĕсене Тăван çĕршыва пĕтĕм чĕререн парăнса ĕçлеме вĕрентсе ÿстерес тĕлĕшпе анăçлă ĕçленĕшĕн» панă.

Ленинла-сталинла комсомол хамăр Тăван çĕршывшăн, хамăр халăхшăн тунă чаплă ĕçсем питĕ те аслă. питĕ те тĕрлĕ. Отечественнăй вăрçăра совет çамрăкĕсен тунă ĕç нихăçанхинчен те паттăртарах.

Большевиксен партийĕ вĕрентсе ÿстернĕскер, ленинла-сталинла комсомол вăл çак вăрçăри чи йывăр кунсенче хамăр Тăван çĕршывшăн хăйĕн пурнăçне шеллемесĕр ĕçлерĕ. Тăшмана çĕнтермешкĕн пĕтĕм халăх вăйне мобилизацилес ĕçре комсомол партин помощникĕ пулса тăрать тесе шутласа, ВКП(б) Центральный Комитечĕ тата Сталин юлташ комсомолăн ĕçне кулленех çул кăтартса ертсе пынă. Ленин—Сталин партийĕ ертсе пынипе, комсомол совет çамрăкĕсене ертсе пырас ĕçе, хамăр Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕшĕн, никама пăхăнманлăхĕшĕн тата чыслăхĕшĕн пынă Отечественнăй аслă вăрçăра вĕсене организацилес ĕçе лайăх туса пынă.

Вăрçăн пĕрремĕш кунĕнчех ВЛКСМ Центральный Комитечĕ комсомолецсемпе çамрăксене Отечественнăй вăрçа хутшăнтарасси çинчен постановлени йышăнчĕ. ВЛКСМ Центральный Комитечĕ комсомолăн мĕнпур организацийĕсене хăйсен ĕçĕсене пĕтĕм халăхăн задачине—фашистла нимĕç захватчикĕсене аркатса тăкас задачăна—пăхăнтарса туса пыма хушрĕ. «Мĕн пурĕ фронт валли, мĕн пурĕ тăшмана çĕнтерме» ятлă лозунг 1941 çулхи июнĕн 22-мĕшĕнчен пуçласа ленинла-сталинла комсомолăн пĕтĕм ĕçĕнче палăрса тăчĕ.

Нимĕç вăрă-хурахĕсем пирĕн çĕршыва тапăнни çинчен калакан хыпар сарăлсанах комсомол комитечĕсене тата çарĕç комиссариачĕсене çамрăк арçынсемпе хĕрсенчен хăйсене фронта яма ыйтса çырнă темиçе çĕр пин заявлени пынă. Пĕр Мускавра кăна вăрçăн малтанхи виçĕ кунĕнче çавăн пек заявленисем 50 пин ытла панă. Граждан вăрçи вăхăтĕнчи пекех комсомолăн чылай организацийĕсем пĕтĕм составĕпех алла хĕçпăшал тытса малти позицисене кайнă. Хăрушлăха кĕрсе ÿкнĕ Ленинградра, Тулăра тата ытти хуласен те çавăн пекех пулнă.

Кам фронта кайма пултараймап, вĕсем тылра халиччен пулман пек хастарлăхпа ĕçленĕ. Производствăра нихăçан ĕçлемен хĕрсемпе çамрăксем станоксем патне тăнă, кăткăс профессисене кĕске вăхăтра вĕренсе алла илнĕ. Двухсотниксен юхăмĕ шăп та комсомол организацийĕнче пуçланса кайнă, двухсотниксем кашни икĕ çыншăн—хăйшĕн тата фронта кайнă юлташĕшĕн ĕçлеме пуçланă.

Йышлă совет çамрăкĕсен паттăрлăхĕнче, вăл вăрçăра тата ĕçре тунă чаплă ĕçсенче—çамрăксене воспитани парас тĕлĕшпе ленинла-сталинла комсомол нумай çул хушши ĕçлени палăрчĕ. Вăрçă çакна кăтартса пачĕ: комсомол çамрăк патриотсен чăн-чăнах паттăр ăрăвне, Ленинăн—Сталинăн аслă ĕçне пĕр пăркаланмасăр пурнăçласа пыракансен, хăйсен Тăван çĕршывне нимрен ытла юрататакансен, тăшмана çав тери курайман çынсен ăрăвне вĕрентсе ÿстернĕ.

Ленинла-сталинла комсомол хушшинчен икĕ пин çынна яхăн Совет Союзĕн Геройĕ ятне илнĕ. 1944 çулта кăна комсомолăн 590 пин членне яхăн Совет Союзĕн орденĕсемпе тата медалĕсемпе наградăланă. Çак пысăк цыфрăсем калама çук пысăк хастарлăхпа хаюлăха кăтартса параççĕ. Çав çынсем хушшинче эпир комсомолăн чаплă воспитанникне—пирĕн çĕршывра виçĕ хутчен Совет Союзĕн Геройĕ ятне илнĕ çынна, чаплă совет летчикне Александр Покрышкина куратпăр, вĕсем хушшинче 56-мĕш гвардейски стрелковăй дивизири 254-мĕш гвардейски стрелковăй полкри рядовойăн Александр Матросов комсомолецăн чаплă ĕçне куратпăр, Александр Матросов вăл тăшман дзочĕн персе тăмалли шăтăкне хăйĕн ÿчĕпе хупласа хунă, çапла вăл Хĕрлĕ Çарăн мĕнпур воинĕсене хастарлăхпа паттăрлăхăн примерне кăтартса панă. Вĕсем хушшинче эпир партизанла вăрçăн, тăшман тылĕнче вăрттăн пынă вăрçăн çамрăк геройĕсемпе геройнисене куратпăр: Мускаври комсомол организацийĕн ĕмĕр манăçа кайми хĕрне Зоя Космодемьянскаяна, халлапри пек «тĕрĕслĕх хыпарçине» Лиза Чайкинăна. Краснодар крайĕнчи нимĕçрен хăрамасан партизансене Игнатов пĕртăвансене. Краснодонри «çамрăк гвардин» геройĕсене тата асапланса вилнĕ çынсене — Тăван çĕршыва сăлмашкăн вилĕмрен те, асапсенчен те хăраман çак хастарлă çамрăк арçынсемпе хĕрсене куратпăр. Çамрăксем партизансен отрячĕсенче 60 процентран пуçласа 70 процента çити пулнă. 50 пин ытла çамрăк партизанпа партизанкăна орденсемпе тата медальсемпе наградăланă. 35 çамрăка Совет Союзĕн Геройĕ ятне панă.

Тылра ĕçлеме юлнă çамрăк патриотсем те Тăван çĕршыва алла хĕçпăшал тытса хÿтĕленĕ ашшĕсене тата пиччĕшĕсемпе тусĕсене тивĕçлĕ пулчĕç. Сталин юлташ паттăр совет çамрăкĕсен ĕçне историе ĕмĕрлĕхе кĕрсе юлмалли чаплăран чаплă ĕç тесе ят пачĕ. Туллимар даннăйĕсем тăрăх, 1945 çул пуçланас умĕн пирĕн çĕршывра çамрăксен бригадисем 150 пин ытла пулнă, вĕсем миллион çамрăк рабочие ытла пĕрлештерсе тăнă. Германие экономика тĕлĕшпе çĕнтерес, Хĕрлĕ Çара хĕçпăшалпа боеприпассем çителĕклĕ парса тăрас ĕçре пирĕн çамрăксем мĕнле вырăн йышăнса тăнине çак цыфрăсем лайăх кăтартса параççĕ. Вăтам машиностроени Халăх Комиссариачĕн предприятийĕсенче çамрăксем мĕнпур рабочисен 55 проценчĕ чухлĕ пулнă, Боеприпас Халăх Комиссариачĕн предприятийĕсенче 42 процент, авиаци промышленноçĕн предприятийĕсенче 40 процент ытла пулнă тата ытти те. Урăхла каласан, çамрăксем производство планĕсен кунçулпе татса панă, çав плансем вара Хĕрлĕ Çара танксем, самолетсем, тупăсем, минометсем, снарядсем, пĕр сăмахпа каласан—кучухнехи вăрçăра кирлисепе пурне те çителĕклĕ парса тăма май панă. Пирĕн Хĕрлĕ Çарăн çитмĕнни тăватă çул хушшинче нимĕн те пулман пулсан, çак ĕçре пирĕн паттăр çамрăксем пысăк вырăн йышăнса тăнă.

Вăрçă вăл халăхăн мĕнпур материальнăй тата духовнăй вăйĕсене тĕрĕслени пулать тесе ахальтен мар каланă. Хĕрлĕ Çаршăн патриотла тăрăшнине пула, производствăна çĕнетес ĕçре талантлă нумай çамрăксем, вăрçă вăхăтĕнчи условисенче ĕçе организацилеме пĕлекен чаплă çынсем ÿссе çитĕнчĕç. Çав çынсем хушшинче чи малти вырăнсенчен пĕрне ленинла-сталинла комсомолăн воспитанникĕсем йышăнса тăраççĕ. Мускаври комсомолкăн, подшипниксем тăвакан 1-мĕш заводри работницăн Екатерина Барышникован ятне халь пĕтĕм çĕршывĕпех пĕлеççĕ. Сахалтарах рабочисемпе ĕçлесех пысăкрах производство заданийĕсене пурнăçлама пуррине вăл чи малтан кăтартса панă. Акă унăн пуçарулăхĕн хăшпĕр результачĕсем: çамрăксен 19 пин ытла бригади, бригадăсенчи рабочисен йышне Барышникова бригади пек чакарса, производствăн ытти участокĕсем валли 80 пин çынна яхăн тупса панă. ку вăл квалификациллĕ рабочисен çĕр пинлĕ армине яхăн пулать.

Вăрçă вăхăтĕнче колхоз производствин чи тĕп йывăрлăхĕ те çамрăксем çине ÿкрĕ. Çамрăк хĕрсемпе ачасем фронта кайнă тракторристсем, комбайнерсем тата ялхуçалăхĕнчи ытти специалистсем вырăнне ĕçлерĕç. Çамрăк хĕрсем кĕске вăхăтрах тракторпа тата комбайнпа ĕçлеме вĕренсе çитрĕç, ĕмĕртенпе арçынсем туса пурăннă ĕçе туса тăчĕç. Вĕсем çак ĕçе питĕ лайăх вĕренсе çитнĕ. Пĕлтĕр ăмăртăва 20 пин ытла трактор бригади тата çамрăк тракторристсемпе трактористкăсем 20 пин çын ытла хутшăннă. Аса илер: çав ăмăртура Рязань облаçĕнчи Рыбное МТС-ĕнчи хĕрарăм трактор бригадин çамрăк бригадирĕ Дарья Гармаш мала тухрĕ. Вăл нихăçанхинчен те ытларах сухаланă. Унăн бригади пĕлтĕр кашни трактор пуçне 1.866 гектар сухаланă. Дарья Гармаш пек çынсене героиня темесĕр урăхла калама та çук. Вĕсем Хĕрлĕ Çара апат-симĕç çителĕклĕ парса тăчĕç, вĕсен çав чаплă ĕçне пирĕн Тăван çĕршыв ĕмĕр манмĕ.

Совет çамрăкĕсем фронтра тата тылра тунă чаплăран чаплă ĕçсем çав çамрăксем хăйсен Тăван çĕршывне чунтан-чĕререн парăнса ĕçленине çав тери уçăмлăн кăтартса параççĕ. Ленинла-сталинла комсомол пирĕн çамрăксене Ленинпа Сталинăн аслă идейисене пĕр пăркаланмасăр пурнăçа кĕртсе пыма, çулăмлă совет патриочĕ пулма, хаюллă, хастарлă, ырă чĕреллĕ пулма вĕрентсе хатĕрлерĕ.

Тăван çĕршыва, большевиксен партине, Сталин юлташа çав тери юратнине пула, совет çамрăкĕсен патриотла ĕçĕсем, çапăçусенче—массăллă паттăрлăх, ĕçре —вăя шеллемесĕр ĕçлесси суралнă, тăлăха юлнă ачасемшĕн, фронтовиксен çемьисемшĕн тăрăшасси тата темĕн тĕрлĕ ытти кулленхи ĕçсем суралнă, анчах çав ĕçсем эпир çĕнтерессин никĕсне хывса пынă.

Парти организацийĕсем комсомола пулăшса ертсе пыни комсомола хамăр Тăван çĕршывăн чи йывăр çулĕсенче комсомолăн хисеплĕ те ответлă задачисене пурнăçлама пулăшрĕ.

Ленинла-сталинла комсомол, большевиксен партийĕ вĕрентсе ÿстернĕскер, вилĕмсĕр Ленин. совет халăхĕсен аслă çулпуçĕ тата учителĕ Сталин юлташ пăхса çитĕнтернĕскер, нихăçан манăçа кайми чапа тухрĕ. Унăн чаплă ĕçне правительство аслă награда парса паллă турĕ. Анчах награда вăл ĕлĕк тунă чаплă ĕçсене йышăнни çеç пулмасть. Вăл хамăр Тăван çĕршывăн чапĕшĕн, унăн çарпа экономика хăватне малалла ÿстерессишĕн çĕнĕ те çĕнĕ патриотла ĕçсем тума чĕнсе тăрать. Мирлĕ строительствăра, совет çамрăкĕсене хамăр Тăван çĕршыва чунтан-чĕререн парăнса ĕçлеме вĕрентес ĕçре, Ленинăн-Сталинăн аслă ĕçĕшĕн вăя шеллемесĕр, нимĕн умĕнче те чаранса тăмасăр ĕçлеме хатĕр тăма вĕрентес ĕçре пирĕн чаплă ленинла-сталинла комсомола çĕнĕ çитĕнÿсем тума сунар!

(«Правда» хаçатăн июнĕн 15-мĕшĕнчи умстатьи).

Союзниксен Репараци Комиссийĕнчи США представителĕ Э. Поули господин Сталинграда пыни

СТАЛИНГРАД, июнĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Июнĕн 14-мĕшĕнче Союзниксен Репараци Комиссийĕнчи США представителĕ Э. Поули господин, унăн помощникĕ посланник И. Люблин доктор, вĕсемпе пĕрле пулнă экспертсемпе советниксем тата СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕн Заместителĕ И. М. Майский Сталинграда пынă. Вĕсем унта фашистла нимĕç захватчикĕсем хулара аркатнипе тата унти юсав ĕçĕсемпе паллашнă.

США представителĕсем Сталинградри предприятисене—трактор заводне тата «Хĕрлĕ Октябрь» завода кайса курнă. Унта вĕсем директорсемпе, инженерсемпе тата рабочисемпе каласнă.

Унта курса илтнисем Поули господина тата унпа пĕрле пулнă çынсене çав тери тĕлĕнтернĕ. Пĕр енчен, вĕсем çав тери вăйлă аркатнине курса тĕлĕннĕ, тепĕр енчен—юсав ĕçĕсен анлăшĕнчен, Сталинград çыннисен пысăк паттăрлăхĕнчен тĕлĕннĕ.

Хăнасем хулара пулнă вăхăтра вĕсене вырăнти совет организацийĕсен представителĕсем, вăл шутра Сталинград облаçĕнчи ĕçсынни депутачĕсен Совечĕн председателĕ П. Ф. Зименков илсе çÿренĕ.

Ĕçсынни депутачĕсен Совечĕн исполкомĕн председателĕ И. Ф. Зименков хăнасен ячĕпе ирхи апатлану панă. Апатланура Э. Поули господин Сталинградри паттăр çынсен, хăйсен вăйне шеллемесĕр ĕçлесе тăван хулана хăвăрт юсакан çынсен ячĕпе черкке çĕкленĕ.

ПЛАНА СРОКЧЕН ТУЛТАРАР

ВĂРНАР. (Хамăр корр.). Район пĕрремĕш кварталта укçа-тенкĕ пухмалли плана 103,1 процент пурнăçа кĕртнĕччĕ. Республика юбилейĕ ячĕпе пыракан социализмлă ăмăртăва хутшăнса, финанс работникĕсем II-мĕш кварталти плана июнĕн 20-мĕшĕ тĕлне тултарма пулчĕç. Июнĕн 5-мĕшĕ тĕлне плана 85,1 процент тултарнă ĕнтĕ. Районри 8 ял Совечĕ хăйсен планĕсене ирттерсе тултарчĕç.

Укçа-тенкĕ пухмалли плана срокчен тултарассишĕн пыракан ăмăртура Иртеменкасси ял Совечĕ малти вырăна тухрĕ. Ку ял Совечĕ плана 151,6 процент тултарнă. Кунта ял Совет председателĕ А. Матвеев юлташ тата финанс агенчĕ Я. Матвеев юлташ укçа-тенкĕ пухас тĕлĕшпе тăрăшса ĕçлеççĕ. Вĕсем финанс активне ĕçе анлăн явăçтараççĕ. Вăл актив колхозниксем хушшинче ăнлантарулă ĕçе лайăх туса пырать.

Çавăн пекех Уравăш, [illegible] Турхан, Вопонтер, Хирпус, Кăмаш тата Кольцовк ял Совечĕсем те лайăх ĕçлеççĕ.

Е. ВОЛКОВ.

Астрономсем хĕвел тĕттĕмленнине сăнама тухса каяççĕ

Хĕвел тĕттĕмленнине сăнама Сортавала хулине Пулков обсерваторийĕн астрономĕсен экспедицийĕн пĕрремĕш ушкăнĕ тухса кайнă. Астрономсем çав вырăнта сăнамалли инструментсем вырнаçтарса лартнă тата Сортавала хулинче хирти виçĕ фотолаборатори организациленĕ.

Астрономсен тепĕр ушкăнĕ Иваново облаçне тухса кайнă. (ТАСС).

„Государствăн колхозсемпе совхозсенче выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли 1945 çулхи планĕ çинчен" СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ йышăннă постановление пурнăçа мĕнле кĕртсе пыни çинчен

Чăваш АССР Совнарком Председателĕ А. М. МАТВЕЕВ юлташ ВКП(б) Обкомĕн XXII-мĕш пленумĕнче тунă докладран

СССР Союзĕн Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ «Государствăн колхозсемпе совхозсенче выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли 1945 çулхи планĕ çинчен» йышăннă постановленипе çакна питех те тĕрĕс палăртрĕç: Чăваш республикинчи советпа парти тата çĕрĕç органĕсем 1944 çулта государствăн выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли планне пурнăçа кĕртеймерĕç тата пур тĕрлĕ выльăхсен йышне те, уйрăмах лашасемпе сыснасен йышне, чакарса ячĕç. Колхозсемпе совхозсенче лашасен йышне сыхласа усрас тата малалла ÿстерес тĕлĕшпе пирĕн республикăри советпа парти тата çĕрĕç органĕсем йышăнакан мерăсене СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ çителĕксĕр тесе палăртрĕç.

Советпа парти тата çĕрĕç органĕсем, çавăн пекех колхозсен руководителĕсем партипе правительствăн çав кăтартăвĕсенчен хăйсем валли практикăллă выводсем турĕç те 1945 çулта республикăри колхозсенче выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе ертсе пырассипе чылай вăйлатрĕç.

Кăçалхи июнĕн 1-мĕшĕ тĕлне пирĕн республикăри колхозсем государствăн общественнăй выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли планне лашасем енĕпе 101.3 процент, ĕне-выльăхсем енĕпе 101.7 процент. сыснасем енĕпе 118.1 процент, сурăхсем енĕпе 135.6 процент тултарчĕç. 30 районран 18 район плана пур выльăхсем тĕлĕшпе те тултарчĕç е ытлашшипех ирттерсе тултарчĕç.

Анчах выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре пирĕн халĕ те пысăк çитменлĕхсем пур-ха. Республикăри уйрăм районсем çак иртнĕ пилĕк уйăх хушшинче выльăх-чĕрлĕх йышне ÿстермерĕç кăна мар, çулталăк пуçламăшĕ тĕлне пулнинчен те чакарса ячĕç. Улатăр, Кувакино, Первомайски тата Пăрачкав районĕсенче лашасен йышĕ чакнă; Канаш районĕнче—ĕне-выльăхсен йышĕ; Улатăр, Сĕнтĕрвăрри, Первомайски, Шупашкар районĕсенче—сыснасен йышĕ чакнă. Пур районсенче те тенĕ пекех, уйрăмах Хĕрлĕ Чутай, Елчĕк тата Калинино районĕсенче, выльăхсем вилни те чылай пулнă. Хăшпĕр районсенче колхоз выльăхĕсене салатса пĕтернисем пур. Уйрăмăн илсен, колхоз выльăхĕсене государство планне тултаричченех колхозниксене е тĕрлĕ организацисене, колхозниксен пĕрлехи пухăвĕ йышăнмасăрах е районри органсем ирĕк памасăрах, сута-сута яраççĕ.

Уйрăм районсен руководителĕсем, плана тултарнине кăтартакан вăтам тĕслĕхсемпе лăпланса ларса, кая юлнă колхозсем çинчен манаççĕ. Сăмахран, Октябрьски районра государствăн выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли 1945 çулхи планне июнĕн 1-мĕшĕ тĕлне пур выльăхсем енĕпе те тултарнă. Çав вăхăтрах районри 81 колхозран плана лашасем енĕпе 26 колхоз, ĕне-выльăхсем енĕпе—36 колхоз, сыснасем енĕпе — 43 колхоз, сурăхсем енĕпе—11 колхоз тултарман. Çакăн пек йĕркесĕрлĕх ытти хăшпĕр районсенче те палăрать. Чылай çĕрте ама выльăхсене сыхласа хăварасси çине çителĕксĕр çавăрăнса пăхаççĕ. Муркаш районĕнчи колхозсенче ĕнесен йышне, Элĕк, Вăрнар, Ишлей, Куславкка, Советски, Вăрмар тата Етĕрне районĕсенче ама сыснасен йышне чакарса янă.

Ама выльăхсен йышĕ выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли никĕс пулса тăрать. Кирлĕ таран ама выльăхсем тытайман колхоз фермисем выльăхсене аякран илессĕ. Çавнашкал фермăсем таварлă фермăсем пулма пултараймаççĕ, вĕсем колхозсене те государствăна та усă кÿреймеççĕ. Çавăнпа та ĕнтĕ советпа парти тата çĕрĕç органĕсен малашне колхоз фермисенчи ама выльăхсен йышне сыхласа хăварассишĕн кăна мар, вĕсен йышне тăтăшах ÿстерсе пырассишĕн те тăрăшмалла. Ама выльăхсене зооветкомиссисем бракланă хыççăн кăна пусмалла е сутмалла йĕрке тăвас пулать.

Çамрăк выльăхсем вилни колхозсен выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçĕнчи пысăк çитменлĕх пулса тăрать. Чăн та, иртнĕ çулхипе танлаштарсан, Муркаш, Комсомольски, Октябрьски, Шăмăршă тата ытти хăшпĕр районсенчи колхозсем кăçалхи çул çамрăк выльăхсем вилессине чылай чакарчĕç. Анчах пĕтĕм республикипе илсен, çак иртнĕ пилĕк уйăх хушшинче тихасем 2.8 процент, пăрусем 3.7 процент, путексем 5,4 процент, сысна çурисем 8,7 процент вилнĕ. Çамрăк выльăхсем Çĕрпÿ, Сĕнтĕрвăрри, Улатăр, Елчĕк, Йĕпреç районĕсенчи колхозсенче уйрăмах нумай вилнĕ.

Çав районсенче çамрăк выльăхсем йышлăн вилни. пуриччен малтан, çамрăк выльăхсем валли лайăх çуртйĕрсем çуккинчен тата вĕсене хуçасăррăн пăхнинчен килнĕ.

Мĕнпур колхозсемпе фермăсенче çамрăк выльăхсене сыхласа хăварассишĕн татăклă кĕрешÿ пуçласа ямалла. Кашни çамрăк выльăх вилессĕнех çавăн çинчен ферма работникĕсен производствăллă канашлăвĕсенче, колхоз правленийĕсен ларăвĕнче сÿтсе-явмалла, çамрăк выльăхсем вилнин сăлтавĕсене тĕпчесе, палăртмалла, çак ĕçри çитменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе çирĕп мерăсем йышăнмалла, выльăхсем вилнишĕн айăплисене çийĕнчех ответ тыттармалла.

Çамрăк выльăхсене сыхласа хăварассишĕн чăн-чăн хуçасем пек тăрăшнине кăтартса паракан тĕслĕхсем пирĕн сахал мар. Советски районри «Красный пахарь» колхозри сысна пăхакан Соломкина юлташ хăйне çирĕплетсе панă 9 сыснаран 170 сысна çури илсе, пурне те тĕрĕс-тĕкĕл пăхса çитĕнтернĕ. Сысна çурисемшĕн тăрăшас ĕçе Соломкина юлташ сысна амисене çăварлаттарма хатĕрленессинчен тытăнать. Ама сыснасем çăварлас вăхăт çитесси вăл сысна витине çĕрле хурал тăрассине йĕркелет. Сысна амисем çăварланă чухне вăл кашнинчех витере хăй пулать.

Районсемпе колхозсен руководителĕсем тата зоотехника работникĕсем малта пыракан колхозсен тата уйрăм работниксен çамрăк выльăхсене сыхласа хăварас ĕçри опычĕпе ыттисене паллаштарма тивĕçлĕ. Çамрăк выльăхсене сыхласа хăварас тĕлĕшпе пур мероприятисене те çирĕп пурнăçа кĕртсе пымалла. Çакă вăл выльăхсене пăхас ĕçе лайăхлатассине, вĕсене тĕрĕс тăрантарса усрассине, ĕç дисциплинине çирĕп тытса пырассине, выльăх-чĕрлĕх фермисенче çамрăк выльăхсене пăхса çитĕнтерес тĕлĕшпе зоотехникăпа ветеринари правилисене пĕр пăркаланмасăр пурнăçа кĕртсе пырассине пĕлтерет.

Пирĕн республикăри нумай колхозсем кăçалхи çул лашасем ĕрчетес тата лашасен йышне сыхласа хăварас ĕçе самаях лайăхлатрĕç. Июнĕн 1-мĕшĕ тĕлне 22 район лашасем ĕрчетмелли плана анăçлăн тултарчĕç. Анчах çав вăхăтрах уйрăм районсенче лашасем ĕрчетмелли плана тултарман кăна мар, лашасен йышне кăçалхи январĕн 1-мĕшĕ тĕлне пулнинчен те чакарса янă. Хăшпĕр районсенче, сăмахран, Елчĕк, Хĕрлĕ Чутай, Шупашкар, Элĕк тата Çĕрпÿ районĕсенче, лашасем ĕрчетмелли плана тултарнă пулин те, лашасем чылай вилни пулнă.

Республика Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕ çирĕп кăтартса панипе пăхмасăрах, 1945 çулта хăшпĕр колхозсенче лашасене тĕрĕс мар бракланисем тата вăхăтлăха ĕçе юрăхсăр пулнă лашасене сутнисем пулнă. Сĕнтĕр районĕнчи колхозсенче, сăмахран, 40 лашана бракланă, ку ĕçе ветеринарипе зоотехникăн уйрăм работникĕсем кăна туса ирттернĕ, çавна пула вара вĕсем пăрахăçланă лашасем хушшинче ĕçе юрăхлисем те сахал мар пулнă.

Лашасене браклас ĕç çине çавăн пек сиелтен пăхассипе пĕтермелле. Ĕçе пăчах та юрăхсăр лашасене кăна браклама юрать.

Лашасем начарришĕн колхоз председателĕсене кăна мар, çавăн пекех тата партипе советăн вырăнти органĕсене те. чи малтан çĕрĕç органĕсене, ятламалла. Лашасене пăхас тата вĕсемпе усă курас ĕçри обезличкăна татăклăн пĕтермелле. Мĕншĕн тесен обезличка лашасем ĕрчетес ĕçе пысăк сиен кÿрет. Лашасен йышне пĕтĕмĕшпех тĕрĕс-тĕкĕл пăхса усрамалла. Çав шутпа кашни колхозрах çакăн пек йĕрке тăвас пулать: конюха лашасем мăнтăррине, вĕсем тасине, вĕсене партипе правительство хушнă пек пăхса усранине кура ĕçкунĕсем шутласа памалла. Лашасене лайăх пăхнăшăн конюха ĕçкунĕсем хушса памалла, начар пăхнăшăн — ĕçкунĕсене катмалла. Кунсăр пусне, СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ колхозсемпе совхозсенче лашасен йышне ÿстермелли тата вĕсене пăхса усрас ĕçе лайăхлатмалли мерăсем çинчен йышăннă постановленире кăтартса панă меслетпе—лайăх ĕçлекен конюхсене хавхалантармалли меслетпе анлăн усă курмалла.

Лашасен йышне кашни колхозăн хăй лашисен шутĕнчен ÿстерсе памалла. Лашасен йышне ÿстересси пĕтĕмĕшпех кĕсресене вăхăтра чуптарса хăварнинчен, пĕтĕ кĕсресене тимлĕн пăхнинчен тата тихасене тăрăшса çитĕнтерсе пынинчен килет.

Кăçалхи июнĕн 1-мĕшĕ тĕлне республикăри колхозсем пĕлтĕрхи çав вăхăт тĕлне илнинчен 1733 тиха ытларах илнĕ. Лашасем ĕрчетесси çинчен партипе правительство 1943 çулхи майăн 12-мĕшĕнче йышăннă постановление пурнăçа кĕртсе пырса, нумай колхозсем тихасем илсе çитĕнтерес тĕлĕшпе чылай çитĕнÿсем турĕç. Етĕрне районĕнчи Киров ячĕпе тăракан колхозри ăратлă фермăн заведующийĕ Почикаров юлташ 11 кĕсререн 10 тиха илсе пурне те тĕрĕс пăхса çитĕнтернĕ. Сĕнтĕр районĕнчи «Колос» колхозăн конюхĕ Вернов юлташ хăйне çирĕплетсе панă 6 кĕсререн 6 тиха илнĕ. Тăвай, Калинино, Канаш, Хĕрлĕ Чутай, Муркаш тата Шупашкар районĕсенчи колхозсем кăçалхи çул тихасем вилессине чылай чакарчĕç. Анчах хăшпĕр районсенче тихасем кăçал та нумай вилнĕ. Елчĕк районĕнче, сăмахран, кăçалхи тихасенчен 6.5 процент, Кувакино районĕнче—6.9 процент, Çĕмĕрле районĕнче—6.2 процент вилнĕ. Çав районсенчи колхозсенче пĕтĕ кĕсресемпе тĕрĕс усă курма тăрăшмаççĕ, çавна пула нумай кĕсресем хăм пăрахаççĕ.

СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ 1945 çулхи апрелĕн 4-мĕшĕнче йышăннă постановленипе 10 кĕсререн ытларах тытакан колхозсенче лаша фермисем организацилеме, хăмлаттарма юрăхлă пур кĕсресене те çав фермăсен аллине пама хушнă. Çав постановление пурнăçа кĕртсе пырса, республикăра 332 лаша ферми организациленĕ те ĕнтĕ. Анчах Етĕрне, Вăрмар, Куславкка, Калинино районĕсенчи колхозсенче лаша фермисем организацилес тата лашасем ĕрчетес тĕлĕшпе ĕçлекен заведующисене çирĕплетес ĕçе вăраха тăсса пыраççĕ.

Колхозсемпе колхозниксен ĕне-выльăхĕсем туртăм вăйĕн пысăк резервĕ пулса тăраççĕ. Ĕне выльăхсемпе уйхир ĕçĕсенче усă курни Чкаловски, Шăмăршă, Тăвай тата Вăрмар районĕсенчи колхозсене кăçалхи çул сурхи уйхир ĕçĕсене кĕске сроксенче туса ирттерме май пачĕ. Пĕтĕм республикипе илсен, кăçалхи уйхир ĕçĕсенче ĕне-выльăхсем 10 пин пуç ытла ĕçлеççĕ, пĕлтĕр 8 пин пуç ĕçленĕ.

Анчах Улатăр, Хĕрлĕ Чутай, Первомайски тата ытти хăшпĕр районсенче ĕне-выльăхсене ĕçе вĕрентме питех те çителĕксĕр тăрăшаççĕ. Сăмахран, Улатăр районĕнче кăçалхи суракинче 269 ĕç вăкăрĕнчен уйхир ĕçĕсенче 197 вăкăр кăна ĕçленĕ.

Пăрачкав, Кувакино, Йĕпреç тата Çĕмĕрле районĕсенче колхозниксен ĕнисемпе ялхуçалăх ĕçĕсенче питĕ çителĕксĕр усă курнă. Çак пысăк ĕçе хакламаннине пĕтермелле, ĕне-выльăхсемпе ялхуçалăх ĕçĕсенче анлăнрах усă курас тĕлĕшпе татăклă мерăсем йышăнмалла, çапла вара начарланса çитнĕ, ĕçе юрăхсăр лашасемпе пĕтĕ кĕсресенчен пĕр пайне кантарма тăратмалла.

Выльăх-чĕрлĕхĕн тухăçлăхĕ пĕчĕкки выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре пысăк çитменлĕх пулса тăрать. Пĕлтĕрхи çул пирĕн республикăра апат çинче тăракан кашни ĕнерен планпа пăхнă 1.100 литр вырăнне вăтамран 681 литр сĕт суса илнĕ, кашни сурăхран планпа пăхнă 2,2 килограмм вырăнне 1,95 килограмм çăм илнĕ, кашни чăхран планпа пăхнă 70 çăмарта вырăнне 42 çăмарта кăна илнĕ.

Нумай колхозсем выльăхсене кĕтÿре çÿретсе тата килте тăрантарса самăртас ĕçе япăх организациленине пула пысăк тăкаксем тÿсеççĕ. Государствăна вăтам ÿт-пÿллĕ е ырхан выльăхсем парса, вĕсем мăнтăр выльăхсем панă чухнехинчен нумай ытларах выльăх расходлаççĕ. 1944 çулта государствăна панă ĕне-выльăхăн вăтам виçи пĕтĕмпе те 187-шер килограмм. сыснасен вăтам виçи 40-шер килограмм, сурăхсен вăтам виçи 25-шер килограмм кăна пулнă. Государствăна панă выльăхсенчен çурри ытла ырхан выльăхсем пулнă.

Ялхуçалăх специалисчĕсен тата çĕрĕç органĕсен çывăх вăхăтри задачи колхоз выльăхĕсен йышне ÿстересси кăна мар, çавăн пекех тата выльăхсен пахалăхне татăклăн ÿстересси те пулса тăрать. Çав задачăна татса парас тесен, колхоз фермисенче зоотехника ĕçне лайăхлатмалла, выльăхсене пăхас тата тăрантарас ĕçе тĕрĕс организацилемелле, тухăçлăрах выльăхсене суйласа илсе çитĕнтерсе пымалла, выльăх-чĕрлĕх продукцине çирĕп шута илсе тамалла. Сăвакан ĕнесене зоотехника правилисем тăрăх тăрантарассине, талăкĕпех кĕтÿре çÿретессине, ĕнесене чĕрĕ курăк çулса парассине тата вĕсене талăкра нумай хутчен сăвассине организацилес ĕçре зоотехниксем ферма заведующийĕсемпе дояркăсене пулăшма тивĕçлĕ.

Государствăна самăр выльăхсем кăна памалла тăвас шутпа, сыснасене самăртмалли тата ĕне-выльăхсемпе сурăхсене кĕтÿре çÿретсе мăнтăрлатмалли плана кашни колхоз тăрăх пĕр пăркаланмасăр пурнăçа кĕртмелле.

Районсемпе колхозсен руководителĕсем фермăсенче ĕçшĕн хушса тÿлемелли закона пурнăçа çирĕп кĕртсе пыма тивĕçлĕ. Кашни ĕне сăвакана, пăру пăхакана, сысна пăхакана, лаша пăхакана тата ытти кашни работнике выльăх-чĕрлĕх тухăçлăхне ытларах ÿстерме, ытларах сĕт суса илме, çамрăк выльăхсене пăхса çитĕнтерме тата пур выльăхсене те самăрса пыма хавхалантармалла.

Выльăх-чĕрлĕх тухăçлăхне ÿстермелли паха майсенчен пĕри ăратлă выльăхсем ĕрчетес ĕçе лайăхлатасси пулса тăрать. Анчах республика Наркомземĕ те, районри çĕрĕç пайĕсем те ку тĕлĕшпе кирлĕ пек ĕçлемеççĕ-ха. Нумай районсенче ăратлă выльăхсем ĕрчетес ĕçе питĕ япăхтарса янă. Ăратлă выльăхсене зоотехника тĕлĕшĕнчен малтанлăха шута илессине йĕркелемен, чи лайăх выльăхсене вĕсен тухăçлăхне кура суйласа илсе пымаççĕ, ăратлă выльăхсене ăратлăх кĕнекисем çине çырса пыма пăрахнă. Юлашки икĕ çул хушшинче Пăрачкав, Шăмăршă, Иш-

(Юлашки 2-мĕш страницăра).

А. М. Матвеев юлташ доклачĕн вĕçĕ

(Пуçламăшĕ 1-мĕш страницăра).

лей районĕсенче ăратлă ĕне фермисене пĕтерсе лартнă. Ăратлă выльăхсем ĕрчетес ĕçе Тăвай, Вăрмар районĕсенче уйрăмах япăх йĕркеленĕ, Шăхасан районĕнче вара ăратлă выльăхсене çырса пымалли кĕнекесене пурне те çухатса пĕтернĕ. Ăратлă выльăхсем ĕрчетес ĕç çине çавăн пек кăревсĕр пăхнине пĕтермелле.

Çак ĕçе лайăхлатас тесен, пуринчен малтан, мĕнпур ăратлă выльăхсене шута илсе тухмалла, вырăнти чи лайăх та тухăçлă выльăхсене суйласа илмелле, мĕнпур фермăсенче аçа выльăхсемпе ама выльăхсем мĕнле йышши выльăхсенчен суралнине, вĕсем мĕнле ăратран тухнине тĕпчесе палăртмалла, кашни выльăх-чĕрлĕх ферми валли пысăк пахалăхлă аçа выльăхсем çителĕклĕ тупса памалла. Ăратлă аçа выльăхсем пăхса çитĕнтермелли плана пурнăçа кĕртмелле, хальхи ăратлă выльăх фермисене аслăлатас тата çĕнĕ фермăсем организацилес тĕлĕшпе куллен ĕçлесе пымалла. Халиччен пĕтернĕ ăратлă выльăх фермисене 1945—46-мĕш çулсенче çĕнĕрен юсаса ура çине тăратас пулать. Сăр леш енчи лаша заводне, Чăваш ялхуçалăх институтĕн, государствăн селекци станцийĕн, ялхуçалăх техникумĕсемпе ялхуçалăх шкулĕсен вĕренӳ хуçалăхĕсене республикăри ăратлă выльăхсем ĕрчетес тĕлĕшпе ĕçлекен кăтартуллă центрсем туса хумалла.

Кăçалхи çул чылай районсем ама выльăхсене чуптарас ĕçе начар мар организацилерĕç. Июнĕн 1-мĕшĕ тĕлне пĕлтĕрхи çав вăхăт тĕлне чуптарса хăварнинчен икĕ хут ытларах чуптарса хăварнă. Анчах чылай районсенче ĕнесене, сыснасене тата сурăхсене чуптарас ĕç питĕ çителĕксĕр пулса пырать. Çапла, сăмахран. Улатăр районĕнче пĕлтĕрхи июнĕн 1-мĕшĕ тĕлне 401 ĕнене чуптарса хăварнă пулсан, кăçал вара 189 ĕнене кăна чуптарнă; сысна амисене пĕлтĕр çак вăхăт тĕлне 415 пуç чуптарса хăварнă пулсан, кăçал вара пĕтĕмпе те 93 пуç кăна чуптарнă.

Чуптару кампанине лайăх ирттермелли чи кирлĕ майсенчен пĕри вăл—ăратлă аçа выльăхсемпе тĕрĕс те çителĕклĕ таранах усă курасси пулса тăрать. Аçа выльăхсене ялан мăнтăр тытса усрамалла. Чуптару кампанийĕ вăхăтĕнче вĕсене уйрăмах тимлĕн пăхмалла. Анчах аçа выльăхсемпе тĕрĕс мар усă курнине тата çителĕксĕр тăрантарнине пула, вĕсене питĕ ырханлатса ярассĕ. Хăйăрсемпе час-часах ĕç лашисем вырăнне усă курассĕ.

Апат-çимĕçпе чĕртавар ресурсĕсене ӳстерес ĕçре вак-тĕвек выльăхсем (кайăк-кĕшĕк, кролик, хурт-хăмăр) ĕрчетесси пысăк вырăн йышăнса тăрать. Хăвăрт ĕрчекен çав выльăх-чĕрлĕхсем çине хальхи вăхăтра уйрăмах тимлĕн çавăрăнса пăхас пулать. Султалăк вĕçленнĕ тĕле Чăваш республикинчи колхозсенче çитĕннĕ кайăк-кĕшĕксем 200 пин пуç, ама кроликсем 8000 пуç тата хурт-хăмăрсем 45 пин çемье пулмалла. Анчах вак-тĕвек выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç республикăра питĕ япăх тăрать-ха. Кайăк-кĕшĕк ĕрчетмелли плана июнĕн 1-мĕшĕ тĕлне 56,9 процент, кроликсем енĕпе—35,1 процент кăна тултарнă. Октябрьски районри колхозсенче çак иртнĕ пилĕк уйăх хушшинче кайăк-кĕшĕксен йышĕ 1299 пуç, Сĕрпӳ районĕнче 1939 пуç чакнă.

Районсемпе колхозсен руководителĕсем кайăк-кĕшĕк, кролик тата хурт-хăмăр ĕрчетес ĕç çине питĕ тимлĕн çавăрăнса пăхма тивĕçлĕ, мĕншĕн тесен çав ĕç колхоз хуçалăхне пысăк усă кӳрет.

Пирĕн республикăри ялхуçалăхне юлашки çулсенче выльăх-чĕрлĕх хушшинче сарăлакан тĕрлĕ чирсем пысăк сиен кӳчĕç. Чир-чĕрсем сарăласси вĕсене хирĕç кĕрешмелли мерăсене, санитарипе профилактика ĕçĕсене тата сыватас ĕçе вăхăтра пурнăçа кĕртсе пыманнинчен, çавăн пекех чылай колхозсенче выльăхсене начар пăхнинчен килнĕ.

Выльăх-чĕрлĕхе чир-чĕртен сыхлас тесен, ветеринари работникĕсем çав чир-чĕрсене хирĕç, пуринчен малтан ерекен чирсене хирĕç, пур мероприятисене те вăхăтра туса ирттерме тивĕçлĕ. Лашасен кăрчанкине тата сурăхсен шĕвĕлчĕнĕпе хирĕç кĕрешесси çине уйрăмах тимлĕн çавăрăнса пăхмалла.

Государствăн выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли 1945 çулхи планĕ çинчен йышăннă постановленире СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ колхозсемпе совхозсенче апат-çимĕç базине вăйлатасси выльăх-чĕрлĕх йышĕ ӳснинчен кая юлса пынине палăртрĕç, çакă вара вăл выльăх-чĕрлĕх йышне тата уйрăмах унăн тухăçлăхне хăвăртрах ӳстерме чăрмантарса тăрать. Правительствăпа партин çав кăтартăвĕ пирĕн республикăна та пĕтĕмĕшпех пырса тивет.

Кăçалхи çул выльăхсем валли хĕл каçмалăх тĕрлĕ апат-çимĕçсем çителĕклĕ таран хатĕрлесе хăварас тесе, пирĕн пур мерăсене те йышăнмалла. Çакна пурнăçа кĕртес шутпа кашни колхозăн, пуринчен малтан, фермăсем çумĕнчи участоксене акса хăвармалли плана пĕр пăркаланмасăр тултармалла, çав участоксем çинчи тырпулсемпе тымар-çимĕçсене пăхса çитĕнтерес ĕçе тĕплĕн организацилемелле, çапла вара тухăçлă тырпула тымар-çимĕçсем туса илмелле.

Силос хывмалли вăхăт çитрĕ. Çак ĕçе тĕплĕн хатĕрленсе тытăнас пулать. Силос хывмалли шăтăксемпе траншейăсене, башньăсене, вĕсен пысăкĕшне тата вĕсем силос хывма юрăхлипе юрăхлă маррине халех шута илсе тухмалла. Силос хывмалли сооруженисем силос планне тултарма çителĕксĕр колхозсенче халех çĕнĕ башньăсемпе траншейăсем тума тытăнас пулать. 1945 çулта силос хывмалли плана тултармалла çеç мар, ирттерсе тултармалла. Кашни колхозрах фермăра ĕçлекен колхозниксенчен силос хывакан бригадăсем организацилемелле, силоса пахалăхлăн хывас тата плана пĕтĕмĕшпех тултарас ĕçĕн ответлăхне ферма заведующийĕсем çине хумалла.

Пĕр кун кая юлмасăр, халех вĕлтренпе арăмути, çулçă пухса типĕтес ĕçе тытăнас пулать.

Утă çулса пухасси çине питĕ тимлĕн çавăрăнса пăхни кирлĕ. Çак уйăхра утă çулмалли машинăсене пĕтĕмĕшпех юсаса çитермелле. косилкăсем тата лашапа ĕçлемелли кĕреплесем валли запаслă пайсем тупса хумалла, кашни колхозра утă çулса пухмалли ĕç планĕ туса. ăна колхозниксемпе колхозницăсем патне çитермелле.

Выльăх-чĕрлĕх йышĕпе унăн тухăçлăхне ӳстермелли плана ăнăçлăн пурнăçа кĕртесси общественнăй выльăх-чĕрлĕх валли хĕл каçма ăшă та таса, çутă сурт-йĕрсем хатĕрлесе панинчен нумай килет. Выльăх витисене хĕле хатĕрлес ĕçе халех тытăнмалла. Зооветработниксем, чăн малтанах, выльăх витисене тĕрĕслесе тухма, унтан вара кашни колхозра выльăх витисене юсаса пĕтермелли срокесене палăртса хума тивĕçлĕ. Витесене юсас тĕлĕшпе ĕçлеме ферма работникĕсемпе платниксенчен уйрăм бригадăсем тумалла.

Кирек мĕнле ĕçĕн ăнăçлăхне те, вăл шутра выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçĕн ăнăçлăхне те, кадрсем татса парассĕ. Выльăхсене тӳрĕ кăмăллăн, хăйсен ĕçне юратакан тата пĕлекен çынсем пăхнă çĕрте çеç пахă результатсем куратпăр. Выльăхсене пăхнă çĕрте ăнсăртран лекнĕ çынсем ĕçлессĕ пулсан, фермăри кадрсем тăтăшах улшăнса тăрассĕ пулсан, унта вара выльăхсем йышлăн вилессĕ, выльăх-чĕрлĕхĕн тухăçлăхĕ япăх.

Партипе совет тата зоотехника работникĕсен задачи—фермăра ĕçлекенсен зоотехникăллă пĕлӳлĕхне ӳстересси, вĕсене вĕрентме чи лайăх колхоз фермисенче кĕске вăхăтлăх курссемпе семинарсем организацилесси. выльăх-чĕрлĕхе пăхакан кадрсене тăтăшах ĕçлекен бригадăсенче çирĕплетсе хăварасси, ĕçе тĕрĕс организацилесси тата ĕçшĕн тĕрĕс тӳлесси пулса тăрать.

Государство умĕнчи обязательствăсене парса татасси—колхозсен пĕрремĕш тивĕçĕ. Республикăра государствăна выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем памалли обязательствăсене срокчен тултарнă колхозсем сахал мар. Красноармейски, Тăвай, Сĕрпӳ, Октябрьски, Элĕк районĕсем государствăна аш-какай памалли çурçулхи плана срокчен тултарчĕç. Государствăна сĕт памалли плана Шупашкар, Красноармейски, Элĕк, Советски районсем япăх мар тултарса пырассĕ. Çăмарта хатĕрлес ĕç Тăвай, Шăхасан тата ытти хăшпĕр районсенче ăнăçлă пулса пырать.

Анчах, республикăна пĕтĕмĕшпе илсен, государствăна выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем парасси çителĕксĕр пырать-ха. Çак ĕçре Комсомольски, Йĕпреç, Куславкка, Первомайски, Пăрачкав, Чкаловски, Шăмăршă тата ытти хăшпĕр районсем уйрăмах кая юлассĕ. Колхозниксемпе уйрăм хуçалăхсем государствăна выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем парасси вара тӳсме çук вăраххăн пырать.

Выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем хатĕрлес ĕçри çитменлĕхе пĕтермелле, государствăна аш-какай, сĕт, çăмарта, çăм тата чĕрĕ тирсем памалли çурçулхи плана июлĕн 1-мĕшĕ тĕлне пур районсем те тултармалла.

Государствăн выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли 1945 çулхи планне республика ăнăçлăн тултарчĕ. Ку лайăх ĕнтĕ! Анчах ку çителĕксĕр-ха. Пирĕн халĕ плана кашни выльăх енĕпе кашни район тăрăх, кашни колхоз тăрăх тултармалла, выльăх-чĕрлĕхĕн тухăçлăхне ӳстермелле, çамрăк выльăхсене пурне те тĕрĕс-тĕкĕл пăхса çитĕнтермелле, выльăхсем вилессине май пур таранах чакармалла, хĕл валли ытларах апат-çимĕç хатĕрлесе хумалла, выльăх витисене вăхăтра та тĕплĕн юсаса ăшăтмалла. Çак ĕçсене тусан вара эпир, «Государствăн колхозсемпе совхозсенче выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли 1945 çулхи планĕ çинчен» СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ йышăннă постановленине пурнăçа кĕртнĕ тесе, хăюллăнах калама пултаратпăр.

Колхозсенче садсем тăвассĕ

ИШЛЕЙ. Тăрăн ял Советне кĕрекен «Новая жизнь», Калинин, Молотов, Водопьянов ячĕпе тăракан колхозсем кăçал пысăк садсем ĕрчетме тытăннă. Ку ĕç уйрăмах «Новая жизнь» колхозра лайăх пырать. Кунта 2 гектар çине 900 тĕп улмуççи лартнă. Улмуççисене лайăх пăхса усрама ятарласа звено туна, ăна М. Галкина комсомолка ертсе пырать. Халĕ улмуççисене вăхăтра шăварса тата выльăх-чĕрлĕхсем сиенлесрен лайăх сыхласа тăрассĕ. Кăçал лартнă улмуççисем пурте пекех чĕрĕлнĕ. Унсăр пуçне тата чылай колхозниксем хăйсен килĕнче 10-шар улмуççирен кая мар лартса хăварнă.

Улмуççисене лайăх пăхса ӳстерессишĕн ку ĕçе лайăх пĕлекен, халĕ ял Совет председателĕ К. Николаев юлташ тăрăшса ĕçлет. Ку тĕлĕшпе вăл колхозниксемпе час-часах калаçусем ирттерет, кирлĕ кĕнекесемпе статьясем вуласа парать.

Трумэн пресс-конференцире калани

ВАШИНГТОН, июнĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Трумэн президент пресс-конференцире çапла каланă: Гопкинса тата Дэвиса хушса янă ĕçсен результачĕсене ăнăçлă тесе шутлама пулать, тенĕ. Трумэн малалла çапла каланă: тĕрĕс те çирĕп мир тăвас тесен, вăрçа çĕнтерӳллĕ вĕçлеме май пана пĕрлĕхлĕх, пĕр-пĕрне шанса тăни тата хисеплени малашне те çаплипех юлмалла. Пĕр-пĕрин шухăшĕсене телеграф тăрăх калаçнинчен лайăхрах пĕлес тесе, эпĕ Гопкинса Мускава, Дэвиса Лондона ятăм. Вĕсем Сталин, эпĕ тата Черчилль хамăршăн меллĕ вăхăтра тата вырăнта тĕл пуласси çинчен калаçнă. Калла таврăннă хыççăн Дэвис тата Гопкинс мана доклад туса пачĕç, тенĕ.

Трумэн çапла каланă: эпĕ, Черчилль тата Сталин пĕрле тĕл пулса калаçмалла, пĕр-пĕрне шанса тăмалла, пиртен кашнийĕ тĕрĕс те çирĕп мир тăвасшăн, тенĕ. Тĕлпулăвăн вырăнне тата вăхăтне палăртса хунă-и? тесе ыйтнине хирĕç Трумэн: палăртса хунă, тенĕ. Анчах та, тесе хушса хунă вăл, ун çинчен тĕлпулу участникĕсем вырăна çитмесĕр пĕлтермеççĕ.

Гопкинса хушнă ĕç пирки панă ыйту çине Трумэн: вăл ĕç ăнăçлă пулчĕ, тесе ответленĕ. Çапла ответлени Польшăри лару-тăрăва та тивет-и? тесе ыйтнине хирĕç Трумэн: тивет, тесе ответленĕ. Тепĕр ыйту çине ответлесе, Трумэн çапла каланă: Лондонран чĕннĕ поляксенчен пĕри Мускава кайма килĕшменни çинчен эпĕ нимĕн те пĕлместĕп, тенĕ.

Арестленĕ 15 поляка ирĕке кăларассĕ-и? тесе ыйтнине хирĕç Трумэн çапла каланă: Гопкинса Мускава янă сăлтавсенчен пĕри çак ыйту пулнă. тенĕ. Ку ыйту пирки калаçусем пулса иртрĕç, анчах вĕсем решени тума май памарĕç. тесе пĕлтернĕ Трумэн. Анчах Пĕрлешӳллĕ Штатсемпе Англи правительствисем арестленисем майлă мĕн тума май пуррине пурне те тума пулассĕ. Корреспондент Трумэна çакăн çинчен асăрхаттарнă: Сан-Франциско хулинче Стеттиниус каласа панă тăрăх. Польша правительстви пирки пыракан калаçусем мĕнпе вĕçленесси арестленĕ поляксем пирки тăракан ыйтăва ăнлантарса панинчен килет. Çак позици халĕ улшăннă-и? — тесе ыйтнă корреспондент. Трумэн çапла ответленĕ: унтанпа позици улшăннă. калаçнă хыççăн ку ыйтăва пĕтĕмĕшпех татса пама пулĕ, тенĕ.

Гопкинс тата Дэвис кайса килнĕ хыççăн лару-тăру лайăхланчĕ, тенĕ Трумэн.

Пĕрлешӳллĕ Штатсен правительстви Польшăн Лондонри правительствине халĕ те йышăнать-и? тесе ыйтнине хирĕç Трумэн: йышăнать, тесе ответленĕ. Çĕнĕ правительство туса хунă хыççăн Лондонри эмиграци правительствăн мĕн тумалла пулĕ? тесе ыйтнине хирĕç Трумэн çапла ответленĕ: Россия, Англия тата Пĕрлешӳллĕ Штатсем килĕшсе çĕнĕ правительство туса хунă хыççăн Лондонри правительство пĕтсе лармалла. Польшăра çĕнĕ правительство туса хунă хыççăн чи малтанхи утăм ирĕклĕ те демократиллĕ суйлавсем туса ирттерессi пулĕ-и? тесе ыйтнине хирĕç Трумэн: çапла пулĕ, тенĕ.

Лондонри поляксем. правительствăна кĕртме палăртнисем, унта кĕме килĕшмессĕ пулсан, мĕн пулса тăрĕ? тесе ыйтнине хирĕç Трумэн çапла каланă: хальхи вăхăтра вĕсене правительствăна кĕме чĕнмессĕ, правительство туса хурас ыйтупа Мускавра пулса иртмелли конференцие хутшăнма анчах чĕнессĕ, тенĕ. Лондонри эмиграци правительство членĕсенчен Мускава пыма нихăшне те чĕнменни тĕрĕс-и? тесе ыйтнине хирĕç Трумэн: вăл тĕрĕс, тесе ответленĕ. «Польша ыйтăвне йывăрлатма, шыва пăтратма» пултаракан ыйтусене ан хускатăр, тенĕ Трумэн пичет представителĕсене. Трумэн каланă тăрăх, вăл лару-тăрăва татса пама тата пурте пĕрле пухăнса правительство тума пултарассине пĕлесшĕн.

Ыйтусем çине ответлесе, Трумэн çапла каланă: мана Сталина тата Черчилле кĕтсе илсе ăсатнă çĕрте корреспондентсем пулмассĕ, тенĕ. Государство секретарĕ Стеттиниус. çар ресурсĕсен управленийĕн руководителĕ пулса ĕçленĕ Бирно тата президент штабĕн начальникĕ флот адмиралĕ Леги манпа пĕрле конференцие пырассĕ. Сывлăхĕсем лайăх пулсан Гопкинспа Дэвис та пĕрле пымалла. Ларусем хупă пулассĕ, тенĕ Трумэн. Пурин те çапнă пулма тăрăшмалла, тенĕ. Вырăссем Пĕрлешӳллĕ Штатсемпе эпир Российăпа пĕрлешсе ĕçлес тенĕ пекех пĕрлешсе ĕçлеме тăрăшассĕ. Вырăссем çакна юлашки калаçусенче кăтартса пачĕç, тенĕ Трумэн.

Трумэн çапла каланă: государство секретарĕ пулса ĕçленĕ Хэлла Сан-Франциско хулинчи конференцие хупнă çĕре хампа пĕрле пыма чĕнтĕм. Хэлл çапла ответлерĕ: унта кайма мана питĕ йывăр. терĕ. Трумэн хăй çакăншăн шеллени çинчен пĕлтернĕ.

Сенат хаксене контроллесе тăрас законопроекта хавшатакан пĕлтерӳ тунă пирки Трумэн хăй пăшăрханни çинчен пĕлтернĕ. Çакăнпа пĕрлех вăл конгреса çар информаци бюровĕн бюджетне нумай чакарассинчен сыхланма чĕннĕ.

Малтан хăй каланине çирĕплетсе, Трумэн тепĕр хут çапла каланă: «Ĕç çине тĕрĕссĕн тытас ыйтупа ĕçлекен яланхи комисси» тăвасси çинчен калакан закона конгресс сасăлама пултарĕ, тенĕ.

Пĕрлешнĕ нацисен Сан-Францискăри конференцийĕнче

САН-ФРАНЦИСКО, июнĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС спецкорĕ). Америкăн шанчăклă çынĕсем пĕлтернинчен çакă паллă пулнă: пилĕк держава представителĕсен çĕрле пулса иртнĕ ларăвĕнче пур делегацисене те устав текстне мĕн май килнĕ таран хăвăртрах хăйсен правительствисене пĕлтерме сĕннĕ.

САН-ФРАНЦИСКО. июнĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС спецкорĕ). Генеральнăй ассамблейăн политикăллă функцийĕпе хăрушсăрлăх функцийĕ пирки ĕçлекен комитет паян пĕтĕм тĕнчери хăрушсăрлăх организацийĕн уставĕн проектĕнчен ассамблея хăрушсăрлăх совечĕн кашни çулхи тата уйрăм отчечĕсене «ырлать е ырламасть» текен пункта кăларса пăрахмалла тунă. Çапла вара çав комитет майăн 31-мĕшĕнче йышăннă хăйĕн решенине пăрахăçа кăларнă. Комитетăн паянхи решенийĕ çапла пулнă: исполнительнăй тата ертсе пыракан комитетсем çак ыйтăва комитета тепĕр хут пăхса тухма тавăрса панă та комитетăн малтанхи проекчĕ ассамблея совета шанманнипе пĕлтерет, тесе асăрхаттарнă.

Комитет председателĕ Боливи делегачĕ Андраде пресс-конференцире çапла каланă: майăн 31-мĕшĕнче комитет йышăннă решение тепĕр хут пăхса тухма Совет Союзĕ сĕнчĕ, тенĕ.

ПĔРЛЕШНĔ НАЦИСЕН КОНФЕРЕНЦИЙĔНЧИ ДЕЛЕГАТСЕНЕ ЧЫСЛАСА ТУНĂ АПАТЛАНУ

САН-ФРАНЦИСКО, июнĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС спецкорĕ). Ĕнер Пĕрлешнĕ нацисен конференцийĕнчи Белорусси делегацийĕн председателĕ Киселев юлташ конференци делегачĕсене чысласа апатлану туса ирттернĕ. Апатланура çаксем пулнă: Громыко, Мануильский, Лаврентьев юлташсем, Англи делегачĕ Батлер, Кăнтăр Африка Союзĕн премьер-министрĕ Смэтс, Китай делегачĕ Веллингтон Ку, Чехословаки делегачĕ Масарик, Греци делегачĕ Софианопулос, Иран делегачĕ Мостафа Адль, Мексика делегачĕ Падилья, Турци делегачĕ Хасан Сака, Венецуэла представителĕ Перес, Югослави представителĕсем Симич, Крашовец тата Деднер, Франци представителĕ Дежан тата ыттисем те.

Апатланура Смэтс генерал Сталин Маршала сăвлăхĕшĕн черкке çĕклеме сĕннĕ. Çавăн пекех Трумэншăн, Черчилльшăн тата Мануильский, Киселев, Громыко юлташсемшĕн черккесем çĕкленĕ.

ИСПАНИРЕ ГИТЛЕРОВЕЦСЕНЕ ХӲТĔЛЕНИ

НЬЮ-ЙОРК, июнĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС) Ассошиэйтед пресс агентстви çапла пĕлтерет: Испанире официальнăй йĕркепе пурăнакан нимĕçсен хисепне Испани полицийĕ 8.000 çын тесе шутлать. Союзниксен посольствисем шутланă тăрăх, Испанире 20.000-тен пуçласа 50.000-е çити нимĕç пурăнать. Вĕсенчен нумайĕшĕ хальхи вăхăтра çуллахи дачăсенче, сăртсемпе тинĕс хĕррисенчи виллăсенче пурăнать. Испани правительстви нимĕçсен банксенчи укçисене тытса илесси çинчен приказ панă. Анчах нимĕçсенчен нумайĕшĕ унччен укçисене хăйсен аллине илнĕ. Германи дипломачĕсемпе официальнăй çынсем кăна хăйсен килĕсенче юлассĕ. Ытти нимĕçсене. вăл шутра темиçе çĕр техника, метерологсене, промышленность советникĕсемпе коммерци эксперчĕсене, Испание пынăскерсене, нимĕç посольствинче паспортсем панă. Вĕсене Испани законĕсене пăхăнма тата палăрмасăр пурăнма кăна хушнă.

Агентство пĕлтернĕ тăрăх, темиçе уйăх каярах нимĕç посольствинчи экономикăпа финанс ыйтăвĕсемпе ĕçлекен атташе нимĕç предпринимателĕсене пурне те, обыск пуласинчен шикленсе, хăйсен пурлăхĕсене шанчăклă çынсене пама уççăнах сĕннĕ пулнă. Нацистсен капиталне тытса тăракан «Сойиндус» компанине те посольство çавăн пек канаш панă. Çак компании вăрттăн капиталĕпе пурлăхне шырасах союзниксен эксперчĕсем пысăк йывăрлăхсем тĕл пулассĕ.

УСТАШСЕН ПУÇЛĂХĔСЕНЕ ВĔЛЕРМЕЛЛЕ СУД ТУНĂ

БЕЛГРАД, июнĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). «Политика» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Югославин 2-мĕш армийĕн çар сучĕ иртнĕ кунсенче Павелича сывăх тăнă çынсен ĕçне пăхса тухнă. Усташсен пуçлăхне Миле Будака, усташсен полковникне Юцо Рукавина тата усташсен «Уйрăм суд» председательне Иван Вигневича сакса вĕлермелле тунă. вĕсен пĕтĕм пурлăхне туртса илмелле тунă. Павелич «правительствинче» «премьер-министр» пулнă Никола Мандича тата çав «правительствăн» министрĕсене Юлий Маканеца, Никола Стейнфла тата Павао Канкие персе пăрахмалла, вĕсен пĕтĕм пурлăхне туртса илмелле суд тунă.

НОРВЕГИ ПРАВИТЕЛЬСТВИ ВЫРĂНТАН ТУХНĂ

ЛОНДОН, июнĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви Осло хулинчен çапла пĕлтерет: июнĕн 12-мĕшĕнче Нюгорсвольд правительстви хăйне вырăнтан кăларма Норвеги корольне Хокона прошени панă. Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ хыпарсем çук пулин те, çапла шутлассĕ: çĕнĕ правительство тăвиччен король хальхи правительствăнах ĕçлесе тăма ыйтнă пуль, тессĕ.

НОРВЕГИРИ КВИСЛИНГОВЕЦСЕНЕ АРЕСТЛЕНĔ

ЛОНДОН, июнĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: Норвеги полицийĕн начальникĕ каланă тăрăх, ку тарана çити Норвегире 15.924 сутăнчăка арестленĕ. Вăл ĕнтĕ Квислинг партийĕн мĕнпур членĕсен çуррине яхăн пулать.

Кунсăр пуçне тата 2.000 квислинговеца арестленĕ пулнă, вĕсене халь вăхăтлăха ирĕке кăларнă. Вĕсене ирĕке кăларни вăл çынсем çинчен ыйту пĕтĕмĕшпех татăлнине пĕлтермест.

ЖАК ДЮКЛО КАЛАНИ

ПАРИЖ, июнĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). 40 пин рабочи пулнă митингра, Франции çурçĕр пайĕнчи Брюэ-Ан-Атуа районĕнче Жак Дюкло рабочисемпе социалистсене çапла калаcа панă: «Рабочи класс пĕр партие пĕрлешессине хирĕç тăма халăх тăшманĕсем кăна пултарассĕ. Франци компартийĕ Францире рабочисен пĕр партине туса хурас тĕлĕшпе мĕн май килнине пурне те тума пулать. Çапла тунипе рабочи класс пĕрлĕхлĕ пулса тăрĕ, çак ĕç Франци халăхне пĕтĕçтерес тĕлĕшпе татăклă ĕç пулса тăрĕ».

Икĕ партие пĕрлештересси çинчен Францири компарти сĕннĕ пирки социалистсен партийĕн руководстви нимĕн те шарламасть. Юлашки кунсенче икĕ партин килĕшӳ комитечĕн икĕ ларăвĕ пулса иртнĕ (учредителлĕ пуху пухас ыйтупа). Вăл ларусем çинчен пĕлтернине. Леон Блюм тăрăшнипе, «Попюлер» хаçатра та, «Юманите» хаçатра та пичетлемен.

ДЕЙР-ЭЗ-ЗОРЕРИ ФРАНЦИ САЛТАКĔСЕНЕ ТЫТКĂНА ИЛНИ

ПАРИЖ, июнĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Франс-пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Дейр-Эз-Зорере (Сири) Англи влаççĕсем Франци салтакĕсен пĕр ушкăнне тытса чарнă.

Лăпкă океан çинчи вăрçă

ЛОНДОН, июнĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: союзниксен Лăпкă океанăн кăнтăр-хĕвеланăç пайĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен пĕрлешӳллĕ командованийĕн штабĕ пĕлтернĕ тăрăх, Австрали çарĕсем Борнео утравĕ çинче 8 миля малалла кайнă та Бруней аэродромне тытса илнĕ. Австрали çарĕсен пĕр пайĕ хальхи вăхăтра Бруней хулинчен 2 милĕра тăрать. Урăх чаçсем Борнео утравĕн хĕвеланăç пайĕнче, Бруней хулинчен 2 миля хĕвелтухăçнерехре аннă.

Союзниксен авиацийĕ Формоза утравĕ çинчи, Малайски çурутравăн хĕрринчи тата Контонпа Шанхай районĕсенчи Япони объекчĕсене тапăннă.

ВАШИНГТОН, июнĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). США-н Лăпкă океанри флочĕн штабĕ пĕлтернĕ тăрăх, Окинава утравĕ çинчи Америка авиацийĕ Японин Кюсю утравĕ çинчи Каноя тата Кусира авиабазисене вĕçсе пырса тапăннă.

Окинава утравĕ çинче 9 кун хушши çапăçнă хыççăн Америкăн тинĕс пехотин чаçĕсем японецсем Ороку çурутравĕнче хирĕç тăнине пусарса лартнă. Японецсем унта 3.500 çын пĕтнĕ.

СССР Прокуратуринче

Майăн 8-мĕшĕнче ТАСС çапла пĕлтернĕччĕ: Совет фронтĕнчи çар влаççĕсем Окулицкий генерал ертсе пынă поляксен ушкăнне арестленĕ. Çав поляксем терорла тата диверсиллĕ ĕçсем тунă, çавăн пекех тата Польша çĕрĕнчи совет çарĕсен тылĕнче вăрттăн радиостанцисем тытнă.

Халĕ çав ĕçе Главнăй Çар Прокуратури пĕркелесе пĕтернĕ. Суд умĕнче çаксем ответ тытмалли паллă пулнă: Окулицкий, Янковский, Бень, Ясюкович тата ыттисем те,—мĕн пурĕ 16 çын.

Ĕçе пăхса тухма СССР Верховнăй Судĕн Çар Коллегине панă.

Ĕçе пăхса тухма çак çитес кунсенчех тытăнмалла.

Аркадий Эсхель

Республика çулĕ

Аслă Сталина халаласа çырнă поэма

* * *

Çулпуçăмăр, тăван аттемĕр,
Вĕри ĕçпе кĕрешӳре
Татах та пысăк ĕмĕтсемĕр
Чĕнетчĕç малалла пире.
Анчах ют çĕршĕн сăхă нимĕç
Хăйĕн ылханлă çăвинчен
Тискеррĕн сикрĕ пире хирĕç
Вăр-хурахла, кĕтмен çĕртен.
Хаяр та шелсĕр вăрçă вучĕ
Ӳксен чечеклĕ çĕр çине,
Пур халăх йышĕ паттăр тăчĕ
Хӳтĕлеме хăйĕн çĕрне.
Чăваш çынни те тухрĕ харăс
Ыттисемпе пĕрле вăрçа.
Фронта ун ывăлĕсем карĕç
Чăн-чăн улăпсем пек тăрса.
Пур фронтсенче те питĕ паттăр
Кĕрешрĕç пирĕн ывăлсем.
Çак вăрçăра тăшман çитессĕн
Мухтавлă Ленинград умне,
Пур халăхсем те кар çĕкленчĕç
Пӳлмешкĕн нимĕçсен çулне.
Кунтах çĕкленчĕ пирĕн паттăр
Чăваш ачи—Смирнов Иван.
Ун çулăмлă ятне паян
Эпир çак уявра чыслатпăр.
Вăл çапрĕ тăшмана хаяррăн,
Вăл выртрĕ сĕмсĕр танк айне,
Анчах хăй урлă кашармарĕ,
Ылханлă нимĕçе ямарĕ
Юратнă Ленинград патне.

Çĕршывăмăр чĕри—Мускавшăн
Пур халăх çапăçнă чухне,
Ыттисемпе пĕрлех чăваш та
Кăтартрĕ хăй паттăрлăхне.
Тăвата çул пĕр лăпланмасăр
Кĕрленĕ юнлă вăрçăра,
Хăватлă Хĕрлĕ Çар канмасăр
Тăшмана ватнă хушăра,—
Хĕвеллĕ, çӳллĕ Кавказран та
Сив çурçĕрти тинĕс таран
Таттисĕр пынă пур фронтра та
Чăваш ачисене куран.
Ывăлĕсене аннемĕр—Атăл
Пиллерĕ аслă хăватне:
— Телейлĕ çул сире сунатăп
Çитмешкĕн çĕнтерӳ патне.
Сталинградра чĕртнĕ хăюлăх
Малтан мала, малтан мала,
Дон урлă, Çурçĕр Донец урлă.
Ват Днепр урлă, Днестр урлă.
Шав малалла, анăçалла,
Васкарĕ паттăррăн, çатуррăн
Прутпа Дунай та Висла урлă
Балканалла, Карпаталла.
Унтан татах та малалла.
Пуян ак Украина çĕрĕ
Татах туллин чечекленет.
Кĕлленнĕ Белорусь та чĕррĕн
Пурнăç тумашкăн çĕкленет.
Карел, литовец, эст, латышĕ—
Совет халăхĕсен пур йышĕ.
Каллех ак ирĕке тухса,
Сывлать, ĕçлет хавасланса.
Çав çĕрсенче эпир куратпăр
Чăваш ывăлĕсен йĕрне.
Вĕсем кĕрешрĕç питĕ паттăр
Пур халăх йышĕпе пĕрле.
Çĕнтерӳпе мухтавлăх çулĕ
Германи урлă уртăнать.
Хăватлă Хĕрлĕ Çар хăюллăн
Пырса кисретрĕ Берлина.
Фронтра хастаррăн çапăçнишĕн
Паха награда илнисем
Халь шутланассĕ çирĕм пинĕн,
Чи пысăк хисепре вĕсем.
Çулпуçăмăр. тăван аттемĕр.
Пĕлетĕн эс вĕсен ятне.
Пур паттăра эс çитĕнтернĕ.
Пилленĕ халăх хăватне.
Хăшне эс паттăр арăсланăн
Вăйне парса кăтартнă çул.
Хăшне эс вутлă çунат панă,
Каланă: ăмăрткайăк пул!
Çапла Совет Союз Геройĕн
Ятне тивлетлĕн илнисем
Вăтăр çынтан иртессĕ пирĕн,—
Мухтавлă Ылттăн Çăлтăрсем!

Акă Петров, чăваш çынни,
Ун ячĕ ялкăшать çӳнми.
Çав пултаруллă генералăн
Ырми-канми саперĕсем
Ĕçленĕ, хывнă пит хастарлăн
Çут çĕнтерӳ кĕперĕсем.
Хăватлă çарăн хурçă маршĕ
Кĕрленĕ кĕперсем çинче.
Петров ятне, юратнă Маршал.
Кăтартнă эс приказсенче.
Чĕре патне хурса чыслатпăр
Паян кашни таса ята.
Ак Боголюбов—тепĕр паттăр,
Вăл çитĕннĕ Шупашкарта.
Пур чаплă орден кавалерĕ
Тăрать мухтавлăн çутăлса.
Вăл Рокоссовскипе ĕçлерĕ
Ун штаб начальникĕ пулса.
Пур пирĕн генерал Макаров,
Чăваш çĕршывĕ, Шупашкарĕ
Ĕлĕк курман ун пек ятсем.
Орлов—Гастелло ученикĕ,
Васильев, Лаптев, ыттисем...
Геройлăхшăн çук пирĕн чикĕ,
Пурте Улăп пекех вĕсем.
Герасимов, Ефимов, Яшин,
Пур Кочетов—çиçĕм чĕре.
Вĕсен ятне кашни ачашшăн
Кăкăрĕнчех илсе çӳрет.
Çулсем иртсе тĕнче лăпланĕ,
Тӳрленĕç йывăр суранĕсем,
Йывăр хуйха этемлĕх манĕ,
Çĕкленĕç çĕнĕ ăрусем,
Анчах çапах та пирĕн халăх
Асран кăлармĕ ĕмĕрне
Хăйĕн яланлăха мухтавлă
Тăван ывăл-хĕрĕсене.

(Малалли пулать).

Малалли. Пуçламăшĕ 111-мĕшпе 112-мĕш номерсенче.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Спецторга ялан ĕçлеме çакăн пек работниксем кирлĕ: подсобнăй хуçалăх директорĕ, бухгалтер, счетовод, атă çĕлекенсем, çĕвĕçсем, тавар сутакансем.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, Ярославская, 22, Клуб «Динамо». Спецторг.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского. 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—57, заместителĕн — 2—89, секретариатăн — 4—26, пропаганда пайĕн — 2—89, парти пурнăç пайĕн 3—39 промышленность пайĕн — 3—97, ялхуçалăх пайĕн — 3—99, рабочисен-корсен пайĕн — 0—67, издательство конторин — 0—23.

Типография № ... Управлении ... СНК ЧАССР Заказ № 2. Тираж 10.000

НТ 00618